26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943 НОЯБРЬ 5 ЭРНЕКУН 220(6457) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Советлă Тăван çĕршывшăн çапăçăва Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсен ывăлĕсем кĕреççĕ. Сывă пултăр Хĕрлĕ Çар—СССР халăхĕсен тăванлăхĕпе туслăхĕн çарĕ!

(Октябрьти социализмлă аслă революци пулнăранпа 26 çул çитнĕ тĕле ВКП(б) Центральный Комитечĕ чĕнсе каланисенчен)

Хĕрлĕ Çарăн çуллахи кампанийĕн итогĕсем

(1943 çулхи июлĕн 5-мĕшĕнчен пуçласа ноябрĕн 5-мĕшне çити).

Хĕрлĕ Çар, тăватă уйăх хушши вăйлăн çапăçса, Верховный Главнокомандованин операциллĕ-стратегиллĕ планне ăнăçлăн пурнăçа кĕртрĕ. Çуллахи тата кĕркуннехи вăхăтра тăшман çарĕсене Смоленск тата Сож шывĕн лешъенне, Днепр шывĕн вăтам тата анатри тăрăхĕн лешъенне хăваласа ярас, çавăн пекех тата нимĕçсен Кубаньри плацдармне пĕтерсе хурас тĕлĕшпе Совет Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсем умне лартнă задачăна пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртнĕ.

1943 çулхи çуллахи кампани, паллă ĕнтĕ, июлĕн 5-мĕшĕнче, гитлерла командовани каланă тăрăх, нимĕçсен фашистла çарĕсем Орелпа Белгород енчен Курск еннелле тапăклăн наступлени тума тытăннипе пуçланчĕ. Противник хăй умне Курск патĕнче малалла тухса тăнă совет çарĕсене хупăрласа илсе пĕтерсе тăкас, Хĕрлĕ Çарăн инçетри тылне пырса тухас тата вăрçа хăйне усăллăн вĕçлес задача лартнă.

Çуллахи çапăçусен итогĕсем çакна кăтартса пачĕç: нимĕçсен çак çĕнĕ стратегиллĕ планĕ, вăйсен шайлашăвне чăннипе шута илмесĕр тунăскер, малтан пуçласа вĕçне çитичченех авантюристла план пулнă тата вăл намăслăн путланса ларчĕ. Хĕрлĕ Çар, оборонăллă вăйлă çапăçусем туса пырса, июлĕн 5-мĕшĕнче наступлени тума пуçланă нимĕçсен фашистла çарĕсен тĕп вăйĕсене хавшатса тата лăпчĕркесе тăкрĕ. Нимĕçсем пысăк çухатусем тӳсрĕç, анчах ăнăçусем тăваймарĕç.

Курск çине тапăнса пыракан нимĕçсен фашистла çарĕсене çĕмĕрсе тăкса, Хĕрлĕ Çар, Верховный Главнокомандовани ставкийĕн приказĕ тăрăх, июлĕн 12-мĕшĕнче хăй татăклă наступлени тума пуçларĕ, нимĕçсен вăйлăн тĕреклетнĕ оборонине татса кĕчĕ те, нумай кунсем хушши хаяррăн çапăçнă хыççăн, августăн 5-мĕшĕнче, — нимĕç çарĕсем наступлени тума пуçланă хыççăн шăпах пĕр уйăх иртсен, — Орелпа Белгород хулисене тытса илчĕ.

Çапла вара, тăшманăн Орел хули патĕнчи чи хăватлă тата пирĕн çĕршывшăн чи хăрушă стратегиллĕ вăйлă плацдармне пĕтерсе тăкнă, çав плацдармпа гитлерла командовани Мускав çине тапăнмалли трамплин вырăнĕнче усă курма ĕмĕтленнĕ.

Нимĕç çарĕн питех те кирлĕ тĕреклетнĕ иккĕмĕш плацдармĕ Белгородпа Харьков районĕ пулнă.

Нимĕçсем çак районра хăйсен танкĕсен тĕп ушкăнне, çав шутрах танксен суйласа илнĕ «СС» дивизийĕсене, пухса тăратнă, хĕçпăшалсемпе боеприпассен пысăк склачĕсене туса хатĕрленĕ тата оборона тумалли тĕреклетнĕ хăватлă линисем туса тухнă.

Харьков енче наступлени тума пуçласа, пирĕн çарсем противникăн оборонине татса кĕчĕç те, вăл вăйлăн хирĕç тăнине çĕнтерсе, августăн 23-мĕшĕнче Харьков хулине штурмласа тытса илчĕç.

Çапла майпа нимĕçсен Белгородпа Харьков патĕнчи плацдармне ăнăçлăн пĕтерсе тăкрĕç.

Противникăн Орел патĕнчи тата Белгородпа Харьков патĕнчи плацдармĕсене пĕтерсе тăкни, нимĕçсене Сталинград патĕнче аркатса тăкнă хыççăн, пирĕн çарсен чи пысăк операцийĕ пулса тăчĕ. Хĕрлĕ Çар Орелпа Харьков районĕнче çĕнтернисем пирĕн çарсен наступленине малалла аталантарса пыма, Донбаса тата Украинăн сулахай çыранри пĕтĕм пайне ирĕке кăларас тĕлĕшпе Верховный Главнокомандованин планне пурнăçа кĕртме çирĕп никĕс туса пачĕç.

Нимĕçсен питех те кирлĕ виççĕмĕш тĕреклетнĕ плацдармĕ вăл — Донбасăн хĕвелтухăçĕнчи пайĕ, Çурçĕр Донец шывĕпе Миус шывĕ тăрăх тунă оборона линийĕ пулнă.

Верховный Главнокомандованин приказĕ тăрăх пирĕн кăнтăрти çарсем наступлени тума пуçларĕç, Миус тата Çурçĕр Донец шывĕсем урлă каçрĕç, нимĕçсен оборонине татса кĕчĕç те, Донец бассейнĕнчен нимĕçсене хăваласа ярса, пысăк çĕнтерӳ турĕç. Ултă кун хушши хăвăрт тапăнса пырса, пирĕн çарсем пĕтĕм Донбаса — çĕршывăн кăмрăкпа промышленность тĕлĕшĕнчен питех те кирлĕ районне ирĕке кăларчĕç.

Наступление ăнăçлăн аталантарса пырса, пирĕн çарсем нимĕçсене хĕвеланăçнелле хăвăрт хăваласа кайрĕç, Азов тинĕсĕн пĕтĕм çыранне пекех ирĕке кăларчĕç тата Мелитопольпе Запорожье патне — Крым çывăхĕнчи тата Днепрăн анатри тăрăхĕ çывăхĕнчи вăйлă тĕреклетнĕ районсем патне пырса тухрĕç.

Орел, Белгород, Харьков патĕнче тата Донбасра йывăр поражени тӳснĕ хыççăн, нимĕç командованийĕ совет çарĕсен наступленине Десна шывĕ патĕнче чарса лартма çав тери хытă хăтланса пăхрĕ. Çав юханшыв тăршшĕнех нимĕçсем кучуххехи оборонăн хăватлă линине туса тухнă, ăна икĕ çул хушши тĕреклетнĕ тата ăна çĕнтерме çук вăйлă тесе шутланă. Пирĕн çарсем йывăр условисенче татăклă çапăçусем туса, Десна урлă каçрĕç те нимĕçсен оборонин çав линине çĕмĕрсе татса тухрĕç.

Пирĕн çарсем Брянскран кăнтăрталла нимĕçсене хĕвеланăçнелле хăваласа пынă вăхăтрах, тăшман çарĕсене çавăн пекех Смоленскпа Рославль енĕсенче те пырса çапнă. Тăшманăн нумай вăхăтлăха туса вăйлăн тĕреклетнĕ линине татса тухса, пирĕн çарсем кунта Днепр шывĕ урлă каçрĕç, Западная Двина шывĕпе Днепр шывĕ хушшинчи вырăна — Смоленск хапхи текен вырăна тытса илчĕç, Смоленск хулине — нимĕçсен хĕвеланăç енчи оборонин стратегиллĕ питех те кирлĕ тĕввине ирĕке кăларчĕç.

Пирĕн çарсем татăклăн çапăçнине пула, çавăн пекех тата противник Новороссийск районĕнче, Кубань шывĕн анат енче тата Тамань çурутравĕнче хирĕç тăнине те çĕнтерчĕ. Çапла майпа нимĕçсен Кубаньри питех те кирлĕ плацдармне пĕтерсе тăкнă. Кубаньри плацдарм нимĕçсене Крыма хӳтĕлеме тата Кавказ еннелле наступлени тума май панă.

Малтанхи çапăçусенче йывăр пораженисем тӳснĕ хыççăн, нимĕçсем наступлени тăвакан совет çарĕсене Днепр патĕнче мĕнле пулсан та чарса лартма хăтланса пăхрĕç. Нимĕç командованийĕ хăйĕн çарĕн тĕп вăйĕсене Днепрпа Молочная шывĕсем патĕнче тунă оборонăн хăватлă линине хӳтĕлеме илсе пычĕ, çак оборона тума питех те меллĕ вырăнта çирĕппĕн тĕрекленсе ларма ĕмĕтленчĕ. Анчах та нимĕçсен ку ĕмĕчĕсем те путланса ларчĕç. Хĕрлĕ Çар питĕ пысăк чăрмав урлă—Днепр шывĕ урлă каçрĕ, противникăн нумай вăхăтлăха тунă оборона сооруженийĕсене çĕмĕрсе татса тухрĕ те Днепр шывĕн сылтăм енче стратегиллĕ паха плацдармсем чылай туса хучĕ. Наступление аталантарса пырса, Хĕрлĕ Çар нимĕçсен фашистла çарĕсене Днепр шывĕн кукринче йывăр поражени кӳчĕ тата Днепропетровскпа Днепродзержинск хулисене — пирĕн çĕршывăн кăнтăрĕнчи промышленноçлă питĕ пысăк центрĕсене тата Пятихатка ятлă чугун çул тĕввине ирĕке кăларчĕ. Кунпа пĕрлех, пирĕн çарсем Молочная шывĕ тăрăхĕнче нимĕç оборонин хăватлă линине татса тухрĕç. Инженерла оборудованисем, танка хирĕç тунă чăрмавсем енĕпе, пехотăпа артиллерие тата танксене пухса тăратни енĕпе Молочная шывĕ патĕнчи оборона линийĕ нимĕçсен Миус шывĕ патĕнчи оборонинчен нумай вăйлăрах пулнă. Çапла вара, пирĕн çарсем противникăн Запорожье хулинчен пуçласа Азов патне çити выртакан пĕтĕм оборонине çĕмĕрсе тăкрĕç те Днепр шывĕн анат енчи тăрăхĕ патне тухрĕç, противникăн Крымри çарĕсен тилĕçĕр тăрăх чакмалли çулне татрĕç.

Верховный Главнокомандованин планĕ тăрăх пултаруллăн пурнăçа кĕртнĕ çак операцисене пула, Хĕрлĕ Çар калама çук пысăк территорие противникран ирĕке кăларчĕ, нимĕçсене стратеги енĕпе питех те паха районсемпе коммуникацисемсĕр тăратса хăварчĕ. 1.200 километр хушшинче — Сож шывĕ юхса кĕнĕ çĕртен пуçласа Хура тинĕс таран тăшмана Днепр шывĕн лешъенне ыватса янă. Сулахай çыранри пĕтĕм Украинăна кĕске вăхăтрах нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă.

Наступлени туса çапăçса пынă вăхăтра пирĕн çарсем тăватă пысăк чăрмав урлă — Çурçĕр Донец, Десна, Сож тата Днепр шывĕсем урлă каçрĕç, çавăн чухне лайăх маневрсем тума пултарнине тата вăрçăри пысăк мастерлăха кăтартса пачĕç.

Çапла ĕнтĕ, Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче тăватă уйăхран та сахалрах вăхăт хушши наступлени туса, Хĕрлĕ Çар Тăван çĕршыва 350.000 тăваткал километр чухлĕ çав тери пысăк территорие таварса пачĕ. Çав территори экономикăпа вăрçă стратегийĕ енчен калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать. Краснодар крайне, Ростов, Ворошиловград, Сталино, Харьков, Полтава, Сумы, Чернигов, Курск, Орел тата Смоленск облаçĕсене нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен пĕтĕмĕшпех тасатнă. Запорожье, Днепропетровск тата Киев облаçĕсен чылай пысăк пайне ирĕке кăларнă. Нимĕçсене Белоруссирен хăваласа кăларас ĕç пуçланчĕ. 2.000 километр тăсăлакан фронтра наступлени туса пырса, Хĕрлĕ Çар хĕвеланăçнелле 300 километртан пуçласа 450 километра çити малалла куçрĕ тата халăх пурăнакан 38.000 пункта ытла, вăл шутра 162 хулана ирĕке кăларчĕ. Фашистла пусмăрлăхран миллионшар совет çыннисене хăтарнă.

Донбаса, Харькова, Орела, Таганрога, Брянска, Смоленска, Днепропетровска, Днепродзержинска, Запорожьене тата ытти промышленноçлă пысăк центрсене ирĕке кăларни Совет Союзĕн экономика ресурсĕсене чылай ӳстерет тата Хĕрлĕ Çарăн хăватне татах та вăйлатать. Çурçĕр Донецпа Днепр хушшинчи çав тери пысăк территорие нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен тасатса, Хĕрлĕ Çар Тăван çĕршыва тырпулăн питĕ пуян районне, çĕршывăн чи тухăçлă ялхуçалăх районĕсенчен пĕрне таварса пачĕ. Тырпул лайăх пулакан çак анлă çĕрсене çухатнă пирки гитлеровецсем апат-çимĕçĕн пысăк базисĕр тăрса юлчĕç. çав базăшăн вĕсем питех те хытă тăчĕç.

Хĕрлĕ Çар тăшманран чугун çулăн çак пысăк тĕввисене ирĕке кăларчĕ: Смоленск, Рославль, Невель, Брянск, Кричев, Унеча, Орел, Михайловскии хуторĕ, Ворожба, Конотоп, Бахмач, Нежин, Харьков, Полтава, Сумы, Ромодан, Гребенка, Дебальцево, Ясиноватая, Никитовка, Павлоград, Красноград, Лозовая, Красноармейское, Волноваха, Синельниково, Пятихатка, Днепропетровск, Запорожье тата ыттисем те. Çапла майпа çак питех те кирлĕ чугун çулсем совет çарĕсен аллине лакрĕç: Мускав — Смоленск, Мускав — Орел—Курск — Белгород — Харьков — Ростов, Харьков — Сталино — Мариуполь, Мускав — Брянск — Новобелица, Курск — Ворожба—Дарница, Орел — Брянск — Рославль — Смоленск, Харьков — Красноград — Днепропетровск, Сухиничи — Брянск—Ворожба, Вязьма — Брянск—Конотоп, Кричев—Унеча — Ворожба — Сумы — Харьков, Бахмач — Ромодан — Полтава, Новобелица — Нежин — Гребенка — Золотоноша, Харьков—Полтава — Кременчуг, Харьков — Полтава—Ромодан—Дарница, Сталино—Волноваха — Пологи—Запорожье, Запорожье — Мелитополь—Геническ, Днепропетровск — Пятихатка тата ыттисем те.

Çапла ĕнтĕ, Хĕрлĕ Çар пирĕн çĕршывăн центрне кăнтăрпа çыхăнтаракан питех те паха чугун çулсене çĕнтерсе илчĕ, çапла майпа çарсене маневрсем тума кирлĕ условисене чылай лайăхлатрĕ, малашне çапăçмалли операциллĕ-тактикăллă майсене хăйне усăллă туса улăштарчĕ. Çав вăхăтрах çак стратегиллĕ паха коммуникацисене çухатнă пирки нимĕç çарĕ войскăсене маневрсем тума кирлĕ лайăх условисемсĕр тăрса юлчĕ тата унăн операциллĕ-тактикăллă условийĕсем начарланчĕç.

Наступлени тунă вăхăтра пирĕн çарсем тинĕс порчĕсене — Анапа, Тамань, Таганрог, Мариуполь, Осипенко (Бердянск) хулисене, пысăк порта тата Хура тинĕс флочĕн иккĕмĕш базине — Новороссийск хулине захватчиксенчен ирĕке кăларчĕç.

1943 çулхи июлĕн 5-мĕшĕнчен пуçласа ноябрĕн 5-мĕшне çити вăхăтра Хĕрлĕ Çар нимĕçсен фашистла çарĕсене çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен йывăр çухатусем тӳстерчĕ. Çак вăхăт хушшинче пирĕн çарсем противникăн 144 дивизине, вăл шутра 28 танковăй тата моторизованнăй дивизине аркатса тăкрĕç. Çак дивизисене пурне те çуллахи кампани вăхăтĕнче пĕр хут кăна мар çынсем тата техника хушса панă. Противникăн, вилнисене кăна шутласан та, 900.000 çити салтакпа офицер пĕтнĕ. Нимĕçсен 98.000 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ, вĕсенчен çурри ытла аманнисем. Çуллахи çапăçусем вăхăтĕнче, вилнисене тата аманнисемпе тыткăна лекнисене пĕрле шутласан, противник пĕтĕмпе 2.700.000 салтакпа офицера ытла çухатнă.

Çак вăхăт хушшинче пирĕн çарсем ПĔТЕРСЕ ТĂКНĂ: самолетсем — 9.900, танксем — 15.400, вĕсенчен «тигр» тата «пантер» йышшисем — 800, бронемашинăсем — 890, тĕрлĕ калибрлă тупăсем — 13.000, вĕсенчен хăй тĕллĕн çӳрекен «Фердинанд» йышши тупăсем — 1.350, минометсем — 13.000 яхăн, пулеметсем — 50.000 ытла, автомашинăсем — 60.500, автоцистернăсем — 390, мотоциклсем — 2.500, тракторсем—900, груз тиенĕ лавсем — 13.000, чугун çул вагонĕсем — 4.000 ытла, паровозсем—300 ытла, тĕрлĕ складсем — 2.000 ытла.

Çав вăхăт хушшинчех пирĕн çарсем çакăн пек трофейăсем ТЫТСА ИЛНĔ: самолетсем — 289, танксем — 2.300, вĕсенчен «тигр» тата «пантер» йышшисем — 204, бронемашинăсем — 190, тĕрлĕ калибрлă тупăсем — 6.800, вăл шутра хăй тĕллĕн çӳрекен «Фердинанд» йышши тупăсем — 139, минометсем — 6.180, пулеметсем — 24.460, снарядсем — 7.759.000, минăсем—2.100.000, авиабомбăсем — 300.000, танксене тата пехотăна хирĕç немелли минăсемпе фугассем — 1.500.000, винтовкăсемпе автоматсем — 450.000 ытла, винтовка патронĕсем—100.500.000, тĕрлĕ кабельсем — 50.000 километр тăршшĕ ытла, автомашинăсем — 15.482, паровозсем — 414, вагонсем — 13.210, груз тиенĕ лавсем — 5.400, лашасем — 30.400, тракторсемпе тягачсем — 873, тĕрлĕ çар хатĕрĕсен склачĕсем — 1.889, мотоциклсем — 3.000 яхăн, велосипедсем — 16.685, радиостанцисем — 1.201.

1943 çулхи июлĕн 5-мĕшĕнчен пуçласа ноябрĕн 5-мĕшне çити вăхăтра противник пĕтĕмпе çухатнă: самолетсем — 10.189, танксем — 17.700, тупăсем — 19.800, пулеметсем — 74.460, минометсем—19.180, автомашинăсем — 75.982.

Фронтсен çарĕсен çапăçăвне çыхăнтарса пырас тата пирĕн пĕтĕм войскăсен çапăçу операцийĕсене ертсе пыма пулăшас ĕçе Верховный Главнокомандованин представителĕсем Маршал Василевский, Маршал Воронов, Маршал Жуков, Маршал Тимошенко, авиаци енĕпе вара — авиаци Маршалĕсем Головановпа Новиков тата авиацин генерал-полковникĕсем Ворожейкин, Фалалеев, Худяков пурнăçа кĕртсе пынă.

СОВИНФОРМБЮРО.

Совет Информаци Бюровĕнчен

НОЯБРĔН 3-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Ноябрĕн 3-мĕшĕнче ДНЕПР шывĕпе КАРКИНИТСКИ заливăн çыранĕ хушшинчи районра пирĕн çарсем, наступлени туса пырса, малалла куçнă, халăх пурăнакан 80 пункта ытла йышăнса илнĕ, вĕсем хушшинче БОЛЬШИЕ КОПАНИ, ЧАЛБАСЫ, МАЛЫЕ КОПАНИ, КЕЛЕГЕЙСКИЕ, МИХАЙЛОВКА, НИКОЛАЕВКА, КРАСНЫЕ, ВЛАДИМИРОВКА ятлă пысăк ялсем пур.

ДНЕПР шывĕн кукринче, ДНЕПРОПЕТРОВСКРАН кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, пирĕн çарсем малалла наступлени туса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ, вĕсем хушшинче КРИНИЧЕВАТЫЙ, КРАСНЫЙ КУТ, ЛЮБИМЫЙ, ПЕРВОМАЙСКОЕ, КРАСНЫЙ ОРЛИК, ГРУЗИНОВКА, НОВО-КИЕВКА ятлă пысăк ялсем пур.

Фронтăн ытти участокĕсенче вăйлă разведка тунă тата артиллерипе минометсенчен персе тăнă.

Ноябрĕн 2-мĕшĕнче пирĕн çарсем пур фронтсенче те нимĕçсен 77 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата çӳлелле перекен артиллери тăшманăн 24 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Днепр шывĕпе Каркинитски заливăн çыранĕ хушшинчи районра пирĕн çарсем ăнăçлăн наступлени туса пынă. Пĕр участокра нимĕçсем хушăри рубежра çирĕпленсе ларнă та вăйлăн хирĕç тăнă. Пĕр чаçăн боецĕсем ăнăçлă маневр туса тăшман тылне кĕрсе кайнă та ăна сасартăк пырса çапнă. Нимĕç пехотине пĕр полка çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă. Нумай çынна тыткăна илнĕ тата полкăн хĕçпăшалĕсене пурне те тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн хăвăрттăн куçса çӳрекен чаçсем, малалла вирлĕн куçса пырса, темиçе яла йышăнса илнĕ. 2.000 гитлеровецран кая мар пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсенчен 16 танк, 34 тупă, ултă кĕпçеллĕ 13 миномет, 100 автомашина ытла, 800 лаша, 10.000 пуç мăйракаллă выльăх, боеприпассен 2 складне, япаласен складне тата тĕштырă хунă 3 пысăк склада тытса илнĕ.

Пирĕн летчиксем чакса пыракан нимĕç çарĕсен колоннисем çине тата Днепр шывĕ урлă каçмалли вырăнта капланса тăнă автомашинăсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнă пирки тăшман çынсемпе техника енчен йывăр çухату тӳснĕ. Сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 15 самолетне пере-пере ӳкернĕ.

* * *

Днепр шывĕн кукринче, Днепропетровск хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, пирĕн çарсем çапăçса малалла куçса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Çак пунктсемшĕн пынă çапăçусенче пирĕн артиллеристсемпе бронебойщиксем нимĕçсен 22 танкне, хăй тĕллĕн çӳрекен 6 туппине, 43 хир туппине, 3 транспортерне, 100 ытла пулеметне пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен 1.500 салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе пĕтернĕ. Тыткăна илнисем пур. Тăшмантан хăй тĕллĕн çӳрекен 4 тупă, 24 хир туппи, тĕштырă тиенĕ 100 вагон, çар пурлăхĕ тиенĕ поезд тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн гвардеецсем тăшманăн 5 контратакине сирсе янă, гитлеровецсене пĕр батальона çити вĕлерсе пĕтернĕ. Тыткăна лекнĕ нимĕç салтакĕсем каланă тăрăх, нимĕçсен 15-мĕш пехотнăй дивизийĕ юлашки çапăçусенче калама çук пысăк çухату тӳснĕ. Стрелковăй ротăсенчен нумайĕшĕнче 15—20-шер çын кăна тăрса юлнă.

Совет авиацийĕ тăшманăн боевой йĕркисене штурмланă тата бомбăсем пăрахнă. Нимĕçсен 4 танкне, çарсем тата çар хатĕрĕсем турттарса пыракан 60 автомашинине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, 20 туппине пусарнă тата горючи складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Балтика тинĕсĕнче тăшманăн 10.000 тонна таякан транспортне путарнă.

* * *

Минск партизанĕсен отрячĕ октябрĕн 17-мĕшĕнчен пуçласа 24-мĕшне çитиччен нимĕçсен фронт линийĕ патнелле боеприпассемпе салтаксем турттарса пыракан 58 автомашинине пĕтерсе тăкнă, 200 гитлеровеца ытла вĕлерне. Унсăр пуçне, совет патриочĕсем шоссе çинчи 6 кĕпере сирпĕнтерсе янă тата телеграфпа телефон линине 8 километр тăршшĕнче ишĕлтернĕ. Партизансем пĕр пысăк ялта вырнаçнă тăшман гарнизонне тапăннă та ăна аркатса тăкнă. Çав гарнизонри нимĕç салтакĕсен пĕр ушкăнне, 30 çын, алăри хĕçпăшалĕсене пăрахса, тыткăна парăннă. Совет патриочĕсем 8 пулемет, 60 винтовка тата гранатăсемпе патронсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен «Аслă Германия» ятлă СС танковăй дивизийĕнчи танковăй полкран тыткăна лекнĕ обер-ефрейтор Георг Кунечни çапла каласа кăтартнă: «Пирĕн полка икĕ çуллĕ вырăна тытса илсе вĕсем çинче çирĕпленсе ларма приказ пачĕç. Çав приказа пурнăçа кĕртме пĕр вăйлă ушкăн турĕç. Ку ушкăна «тигр» йышши 6 танк тата пехота лартнă 12 грузовой автомашина кĕчĕç. Çĕрле çак ушкăн вырăссен позицийĕ патне куçма пуçларĕ. Куçса пынă чухне ман танка снаряд лекрĕ те, танк çунма пуçларĕ, ытти танксене те çавăн пекех персе çĕмĕрчĕç, вĕсем те вырăссен позицийĕсем патне çитичченех чăрăнса ларчĕç». Çав полкранах тыткăна лекнĕ ефрейтор Эрих Эйхингер çапла каласа кăтартнă: «Пĕр уйăх хушшинче пирĕн полкра «тигр» йышши 14 танк пĕтрĕ. Юлашки çапăçу хыççăн вара полкра пĕр юсавлă танк та тăрса юлмарĕ. Малтан эпир çапла шутлаттăмăр: «тигрсем» пулăшнипе вырăссем кирек мĕнле хирĕç тăнине те çĕмĕрсе тăкма пулать, теттĕмĕр. Халĕ ĕнтĕ салтаксем нумайĕшĕсем çакна ăнланса илчĕç: эпир «тигрсен» вăйне ытла пысăка хунă, вырăс артиллерийĕн чăн вăйне пĕлмен. «Тигр» йышши танксем вĕсем пирĕн юлашки шанчăкчĕ. Халĕ ĕнтĕ çак шанчăк та пĕтсе ларчĕ. Вырăссем «тигрсемпе» çапăçма вĕренсе çитрĕç».

* * *

Смоленск облаçĕнчи Гореново ялĕнчи çынсем нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем тунă ĕçсем çинчен каласа кăтартнă: «Нимĕçсем пирĕн яла 1941-мĕш çулхи августăн 5-мĕшĕнче пырса кĕчĕç. Вара икĕ çул ытла хуçаланса пурăнчĕç. Малтанхи кунсенчех гитлеровецсем ялти халăха килĕсенчен хăваласа кăларчĕç. Хĕрарăмсемпе пĕчĕк ачасем сарайсенче, çĕр пӳртсенче тата шăтăксенче хĕсĕнсе пурăнчĕç. Бандитсем колхоза пĕтĕмпех çаратса пĕтерчĕç, колхозниксенчен вĕсен тырпулне тата хаклăрах япалисене пурне те тытса илчĕç. Нимĕçсем Германи каторгине вăйпа 60 хĕрпе çамрăк ачана хăваласа кайрĕç. Хĕрлĕ Çар пыра-пыра çапнипе каялла чакма пуçласан, гитлеровецсем пирĕн яла икĕ вĕçĕнчен те вут тĕртсе ячĕç. Пушарта 100 кил ытла пĕтрĕ. Нимĕçсем ялти пĕтĕм халăха Германие хăваласа кайма тăчĕç, анчах та Хĕрлĕ Çар чаçĕсем вĕсен çулне пӳлсе лартрĕç те пире нимĕçсен чуралăхĕнчен хăтарчĕç».

Элĕк районĕ государствăна тырă парса татрĕ

ЭЛĔК, ноябрĕн 3-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем ноябрĕн 1-мĕшĕнче государствăна тырă памалли плана 101 процент тултарчĕç. Халĕ государствăна 1944 çулшăн аванс шучĕпе тырă параççĕ.

Çавăн пекех район государствăна аш-какай памалли плана 100,5 процент, çăм — 101,8 процент тата утă памалли плана та пĕтĕмĕшпех тултарнă. Районри колхозсем государствăна оборона гектарĕсем çинчен пухса илнĕ тырра 1.600 центнер пачĕç.

М. ФЕДОТОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

ВЦСПС-па ССР Союзĕн Апат-çимĕç промышленность Халăх Комиссариатĕнче

ВЦСПС-па ССР Союзĕн Апат-çимĕç промышленность Халăх Комиссариачĕ, совхозсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи виççĕмĕш кварталти итогĕсене пăхса тухса, Шупашкарти çырла-çимĕç совхозне виççĕмĕш преми памалла тунă.

Хамăр сăмаха пурнăçа кĕртетпĕр

Пирĕн «Коммунар» артель коллективĕ, социализмлă ăмăртăва хутшăнса, Октябрь уявне çитĕнӳсемпе кĕтсе илме пулчĕ. Эпир халĕ хамăр обязательствăна пурнăçа кĕртсе çитерни çинчен пĕлтерме пултаратпăр. Пирĕн артель 3-мĕш кварталти плана 174 процент тултарчĕ. Октябрьти плана та ăнăçлăн пурнăçа кĕртрĕмĕр.

Артель членĕсенчен нумайĕшĕсем ĕç тухăçлăхне ӳстерсех пыраççĕ. Çапла, халĕ П. Узюкин юлташ нормăна 500 процент, Узюкина 300 процент, А. Басов юлташ нормăна 180 процент, Кудряшов 175 процент тултараççĕ. Стефейкин, Сулагаев, Павлов, Родионов, Павлова юлташсем те вĕсенчен кая юлмаççĕ.

ФЕДОРОВ,
Первомайски районри «Коммунар» артель председателĕ.

Вăрлăх фончĕ хывăççĕ

КАЛИНИНО. (Хамăр корр.). Район колхозсем аслă Октябрь уявне çĕнĕ çитĕнÿсем туние кĕтсе илессишĕн ăмăртса сарса пыраççĕ. Государствăна тыра памалли обязательствăна пурнăçлана хыççăн, вĕсем килес çулхи ана вăхăтне çине тыра парăççĕ.

Айкашри Киров ячĕпе тăракан колхозра тырпула çапса пĕтернĕ. Хыççăн вăрлăх фончĕсене хывнă. Кунта тырпулсене сортлас тĕлĕшпе ятарласа бригада организациленĕ. Çак бригада кĕске вăхăт хушшинчех сĕлĕ тата тулă сортласа пĕтернĕ. Халĕ юлашки юлнă викăпа пăрçана сортлаççĕ. Колхоз вăрлăх фондне пур културăсем тăрăх та хывса пĕтернĕ.

Тÿси Мăратри «Клевер» колхоз октябрĕн 12-мĕшнех авăн çапса пĕтерчĕ тата государствăна тыра парса татнă. Вăл вăрлăх фончĕсене те хывса çитерчĕ, 150 центнер тыра çул валли пур културăсен вăрлăхĕсем те ситесçĕ.

Калинино районĕ октябрĕн 30-мĕшне вăрлăх фончĕсене 85 процент хывнă.

Х. ЛИСИН.

Фронтри пек ĕçленин тивлечĕ

ШАХАСАН. (Хамăр корр.). Хыçалкăри «Трактор» колхоза ВКП(б) членĕ — Павел Евлампьев ертсе пырать.

Иртнĕ çулсенче ку колхоз ситĕлексĕр тыра вырас, авăн çапас ĕçсене вăхăтра ĕлкĕртсе пыраймастчĕ. Кăçал вара колхоз председателĕ Павел Евлампьев иртнĕ çулсенчи ситменлĕхсене пĕтересшĕн хытă тăрăшрĕ. Ĕçе тĕрĕс йĕркелерĕ. Çавна пула ĕнтĕ «Трактор» колхоз кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн ирттерсе, районра Хисеп хăми çине кĕме тивĕçлĕ пулчĕ.

Тыра вырма туса умĕн кунта çĕнĕ график туса хатĕрленĕ. Çав графикре кашни бригадăн тата кашни колхозникăн ăçта, хăçан тата мĕн тумаллине палăртнă. Ун çинчен колхозниксене малтанах тĕплĕн калаçса ăнлантарнă. Çапла вара кунта кашни колхозник уборка вăхăтĕнче мĕн тумаллине пĕлсе тăнă.

Çакă вăл ĕçре пысăк усă пачĕ. График куллен епле пурнăçланса пынине колхоз правленийĕ яланах тĕрĕслесе тăнă. Графика пăснисем пулсан, çийĕнчех çав сăлтавсем мĕнрен килнине тишкерсе тухнă. Пĕр-пĕр колхозник мĕнле те пулин чăрмавсемпе ĕçе тухайман пулсан, колхоз правленийĕ ăна çийĕнчех ĕçлеме кирлĕ условисене туса панă.

«Трактор» колхозăн кăçал пĕтĕмпе 181 гектар кĕрхипе çурхи тырăсем пуçтарса кĕртмелле пулнă. Колхозниксем çине тăрса тата ĕç вăхăчĕпе туллин усă курса ĕçленине пула, çав тырра 17 кун хушшинче вырса пĕтерсе капана хывнă. Тырă вырнă çĕрте малтанах юсаса хатĕрленĕ жнейкăсемпе çавасем пĕр чăрмавсăр ĕçленĕ. Колхозниксем ĕç нормисене тултарса пырассишĕн ăмăртнă. Фронтовик арăмĕсем Е. Сергеевăпа А. Матвеева кулленех 0,16 гектар вырса, нормăна 196 процент таран тултарса пынă. 16 çулхи çамрăк хĕрача Анна Федотова та ĕçре вĕсенчен юлман.

Колхоз правленийĕ куллен пулăшнине пула, эвакуаци йĕркипе куçса килнĕ çынсем те уборка ĕçне анлăн хутшăннă. Мускавран куçса килнĕ Пересковья Аверина кулленех ĕç нормине 200 процент таран тултарса пынă. Кăсал вăл, колхозра ĕçлесе, 200 ĕçкунĕ ытларах тунă, вĕсенчен 40 пăта яхăн тырă илет. Колхоз ăна лайăх хваттер тупса парса, сысна çурине чăхсем парса пулăшнă.

Колхоз октябрĕн 13-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтерчĕ. Авăн çапнă çĕрте планпа пăхнă 35 çын яланах ĕçленĕ. Государствăна тыра леçме уйăрнă лашасемпе кулленех тырă турттарас тĕлĕшпе 3—4 хутчен хĕрлĕ обозсем организациленĕ. «Трактор» колхоз тыра памалли плана срокчен пурнăçларĕ тата 385 пăт çитес çул шăн тыра парса хунă.

Уборка вăхăтĕнче агитацилле-массăллă ĕçе анлăн туса пынă, колхозниксене фронтри пек хăвăртлăхсемпе ĕçлеме хавхалантарнă.

Октябрĕн 29-мĕшĕ тĕлне «Трактор» колхоз общественнăй выльăхсене хĕле кăçарма тĕплĕн хатĕрлесе çитнĕ. Выльăх апачĕсене колхозникĕ фермăра ĕçлекенсен алăпе актпа уйăрса панă, вĕсене типтерлĕн тыткалаççĕ. Çийĕнчĕк уламсемпе выльăхсен айне сарса панă çĕрте тата витесене ăшăтнă çĕрте усă кураççĕ.

Ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлесе, выльăх-чĕрлĕхсене хĕл каçарма лайăх хатĕрленсе çитнĕ хыççăн колхоз тĕрлĕ фондсене уйăрма тата тупăшсене ĕçкунĕсем тăрăх колхозниксене валеççе пама хатĕрленет. Вăрлăх фончĕсене пĕтĕмĕшпех уйăрса уйрăм амбарсене хунă. Вĕсене çывăх кунсенчех çитес çул акса хăвармашкăн сортлама тытăнаççĕ. Халĕ сортламалли машинăсене хатĕрлеççĕ. Кладовщик Е. Семенова вĕсене пĕрмаях тĕрĕслесе, лайăх усрать.

Колхозниксем кăçал ĕçкунĕсем çине тырпул чылай илеççĕ. Д. Павлов колхозникăн çемьи кăçал 800 ĕçкунĕ тунă, вĕсем 126 пăт тырă, 1000 тенкĕ укçа тата пахча-çимĕçсем илеççĕ. Çавăн пекех фронтовик арăмĕсем Х. Прохоровăпа Е. Андреева тата ыттисем те нумай тырпул, укçа тата пахча-çимĕçсем илеççĕ.

Уява хатĕрленнĕ май, кунти колхозниксем фронтовиксем патне 50 килограмм тулă çăнăхĕ, 30 килограмм типĕтнĕ какай, çĕрулми, кишĕр тата нумай ăшă тумтирсем ярса пачĕç.

Степан АСЛАН.

Еç пахалăхĕшĕн тăрăшмаççе

Канашри инвалидсен «Красный воин» артелĕ республикăра малта пыракан артельсен хисепĕнче тăрать. Артель продукци кăларас тĕлĕшпе çулталăкри плана та тултарнă. Анчах та унта ĕçĕн пахалăхĕ çине тивĕçлипе çавăрăнса пăхмаççĕ вара. Акă, илер атă-пушмак çĕлекен мастерскоя (заведующийĕ Устюгов). Юсама е çĕнĕрен тума панă ată-пушмаксене вăл ячĕшĕн кăна туса парать. Устюгов юлташран: мĕншĕн ĕç пахалăхĕшĕн тăрăшмастăр? тесе ыйтсан, вăл: «Ку ĕç ĕнтĕ манран килмест, вăл мастертан килет», — тет. Мастерăн ĕçне Устюгов юлташăн тĕрĕслемелле мар-ши вара? Кунсăр пуçне, унта заказ паракан çынсен япалисене улăштарса юсас йăла та пур. Çавăн пек тĕслĕхсем темиçе те пулнă. Артель правленийĕ çакăн пек йĕркесĕрлĕхсене пĕлсе тăрать пулин те, нимĕнле мера та йышăнмасть.

— Халь вăрçă. Пурте пулма пултарать, — тет правлени председателĕн заместителĕ Ушаков юлташ. Çĕвĕ çĕлекен цехра та çавăн пек тĕслĕхсем палăраççĕ. Цех заведующийĕ Петухов юлташ хăйне çывăх тăракан çынсен заказĕсене срокченех туса парать. Çав вăхăтрах хăшпĕр заказсене ик-виçĕ уйăх тумасăр выртарать.

Ф. МАЛЫШКИН.

Ялсовечĕсен ăмăртăвне вăйлатар

Республикăри чылай ялсовечĕсем кăçал ялхуçалăх ĕçĕсене ытти çултинчен ăнăçлăрах туса пĕтерчĕç. Темиçе çĕр колхоз, вăйлă тырпул туса илсе, государство умĕнчи пур парăмсене те срокчен парса татрĕç. Етĕрне, Вăрнар, Сĕнтĕрвăрри, Шупашкар, Калинино, Вăрмар, Элĕк районĕсем государствăна тырă парса татрĕç.

Район совечĕсен тата ялсовечĕсен депутачĕсем чылайĕшĕ фронта кайрĕç. Вăрнар райсовет исполкомĕнче 1939 çулта суйланă 35 депутатран 15-шĕ кăна юлнă. Апла пулин те вĕсем, активпа çирĕп çыхăну тытса ĕçлесе, государство умĕнчи тивĕçлĕхе ытти районсенчен маларах пурнăça кĕртрĕç. Колхозсемпе ялсовечĕсене пулăшма райсовет депутачĕсене уйрăм ялсоветсем çумне çирĕплетнĕ. Район совечĕн депутачĕ Авксентьева юлташ Уравăш ялсовет исполкомĕн председателĕ пулса ĕçлет. Унăн ялсоветĕнчи колхозсем кăçал вăйлă тырпул туса илчĕç. Гектартан вăтам шутпа 20 центнер ямăк, 16 центнер тулă тухнă. Районра уйхир ĕçĕсене пуринчен малтан туса пĕтернĕ. Килес çулхи çураки валли вăрлăхсене сортласа хунă. Обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пур енĕпе те тултарнă.

Уравăш ялсовечĕ çак çитĕнÿсене ялсовет депутачĕсем, колхозсене конкретно пулăшса пынипе, колхозниксем хушшинче массăллă-ăнлантарулла ĕçе йĕркеллĕн туса пынипе, ĕçе тĕрĕс организациленипе тунă. Уборка вăхăтĕнче депутатсем агитацилле-массăллă ĕçе ертсе пынă.

Райсовет депутачĕ Воробьева юлташ Кĕмĕл Ямаш колхозĕн председателĕ пулса ĕçлет. Унччен çак колхоз пур ĕçре те юлса пынă. Халĕ вăл ялсоветĕнче малта пыракан колхоз шутланать.

Депутат Марков фронтран амантса таврăннăранпах трактор бригадин учетчикĕ пулса ĕçлет.

Райсовет исполкомĕн депутачĕ Игорев юлташ хатĕрлев наркомачĕн районри уполномоченнăйĕ пулса ĕçлет. Район государство умĕнчи парăмсене срокчен пурнăçларĕ. Октябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне тырă парса татрĕ, ашгкакай памалли обязательствăна 135 процент, сĕт-çу памалли обязательствăна 102 процент, çăмарта памалли обязательствăна 102 процент, çăм памалли обязательствăна 109 процент, утă памалли обязательствăна 100 процент, çĕрулми памалли обязательствăна 104 процент тултарчĕ.

Вăрнар районĕнчи депутатсем çитĕнÿсемпе лăпланса лармаççĕ, вĕсене çирĕплетсех пыраççĕ. Тăшмана тĕппипех аркатса тăкма мĕн кирлине Хĕрлĕ Çара йăлтах парса тăрас тесе, вĕсем мĕнпур вăйа фронта пулăшнă çĕре мобилизацилӗççĕ.

Анчах чылай районсенче депутатсем ялсовечĕсен республикăри ăмăртăвне кирлĕ пек хутшăнман ха.

Государство умĕнчи тивĕçлĕхе ăнăçлăн пурнăçа кĕртессишĕн, тырпул, ашгкакай, сĕт-çу, укçа тенкĕ парăмĕсене срокчен парса татассишĕн ялсовечĕсен вăйлăнрах кĕрешмелле, социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пымалла.

М. ПРОХОРОВ.

Ӳкерчĕк çинче: пирĕн паттăр земляк сержант Анатолий Григорьев. Вăл хальхи вăхăтра çыхăну взвочĕн командирĕ пулса çапăçать. Отечественнăй аслă вăрçăра хăюлăхпа геройлăх кăтартнăшăн „За боевые заслуги" медаль илнĕ. Халĕ ăна татах „Хĕрлĕ Ялав" орденĕ пама тăратнă.

А. Г. Григорьев юлташ Красноармейски районри Шетмĕ ялĕнче çуралнă. Вăрçа кайиччен Шупашкарти макарон фабрикинче ĕçленĕ.

П. АБРАМОВ фото-ӳкерчĕкĕ.

Çĕнĕ ФЗО шкулĕнче

СЕНТЕРВАРРИ, ноябрĕн 4-мĕшĕ. (Телефонпа). Кунти судоверфь çумĕнче кăçал çĕнĕ ФЗО шкулĕ уçнă. Унта пулас строительсене — 200 çамрăка вĕренме илнĕ. Вĕсем хушшинче пуринчен ытларах Сĕнтĕрвăрри тата Етĕрне районĕсенчи çамрăксем.

Шкул дирекцийĕ вĕренме кĕнĕ çамрăксене лайăх йышăннă.

Пароход евĕр тунă çĕнĕ общежитире ФЗО шкулне вĕренме кĕнĕ çамрăксем пухăннă. Вĕсем кашниех çĕнĕ курткăсемпе Тинĕс-Çар Флочĕн какарчĕллĕ çĕлĕксем тăхăннă. Вĕренекенсене кĕçех уяв кунĕсенче тăхăнмалли тумтир параççĕ.

Общежитие ВЛКСМ Центральный Комитечĕн комсоргĕ Иванов юлташ пычĕ. Вăл кам-кам комсомолта тăнине ыйта-ыйта пĕлчĕ, ун хыççăн çамрăксемпе пуçламĕш хут калаçу ирттерчĕ. Вăл ачасене «отлично» вĕренме тата çине тăрса ĕçлеме чĕнчĕ.

Паян шкулта вĕренӳ пуçланчĕ.

С. АЙДАР.

ÇУЛТАЛĂК ПЛАННЕ СРОКЧЕН ТУЛТАРАССИШĔН

КАЛИНИНО. (Хамăр корр.). Вăрман хуçалăх коллективĕ производство планне уйăхран уйăха, кварталтан кварталa тултарать. Пĕрремĕш çурçулта вăл плана çунасем тăвас енĕпе 128,8 процент, урапа тĕнĕлĕ тăвас енĕпе — 206 процент, клепка тăвас енĕпе 216,4 процент, йывăç кĕреçесем тăвас енĕпе 497 процент тултарнă. Коллектив çулталăкри плана пур тĕлĕшпе те Октябрьти Социализмлă Аслă революци 26 çул тултарнă тĕле пурнăçлассишĕн кĕрешет.

Вăрман хуçалăхĕнчи кадровăй рабочисенчен 64 проценчĕ стахановецсем. Вĕсем кашниех ĕç нормине 150—200 процент тултараççĕ. Павел Муравьев, Михаил Иванов тата Павел Михайлов рабочисем нормăна 150—170 процент тултараççĕ. Столяр Андрей Николаев кирек мĕнле задание те срокчен тата пысăк пахалăхпа пурнăçлать. Кĕреçесем тунă чухне вăл хăйне панă задание — 170 процент, çунасем тунă чухне — 150 процент тултарса ĕçлерĕ.

Хальхи вăхăтра вăрман хуçалăхĕнче килес çуркунне йывăçсем лартма хатĕрленеççĕ. Çак ĕçе те коллектив ăнăçлăн туса пырать.

США-н государственнăй секретарĕ Кордэлл Хэлл господин тата Великобританин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Антони Иден господин Мускавран кайни

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен государственнăй секретарĕ Кордэлл Хэлл господин тата Великобританин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Антони Иден господин ноябрĕн 3-мĕшĕнче Мускавран тухса кайнă.

Аэродромра Хэлл господина, Иден господина тата вĕсемпе пĕрле пулнă çынсене çаксем ăсатнă: Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ, Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн заместителĕсем— А. Я. Вышинский, В. Г. Деканозов, М. М. Литвинов, И. М. Майский юлташсем, Тулашри суту-илӳ Халăх Комиссарĕн заместителĕ М. С. Степанов юлташ, генерал-полковник Ф. И. Голиков, Мускав Хула Совет Исполкомĕн председатель заместителĕ М. А. Яснов юлташ, Мускав хулин коменданчĕ генерал-майор К. Р. Синилов, НКИД-ăн ответлă сотрудникĕсем — Г. Н. Зарубин, К. В. Новиков, Г. И. Фомин юлташсем, Оборона Халăх Комиссариачĕн Тулашри çыхăнусен отделĕн начальникĕ генерал-майор В. Н. Евстигнеев.

Аэродромра çаксем пулнă: Великобританин Совет Союзĕнчи посолĕ А. К. Керр господин, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Совет Союзĕнчи посолĕ В. А. Гарриман господин, Америкăн тата Британии посольствисен членĕсем тата США-па Великобританин çар миссийĕсен членĕсем.

Асатнă вăхăтра хисеплĕ караул тăратнă. Аэродрома Великобританин, Пĕрлешӳллĕ Штатсен тата Совет Союзĕн флагĕсемпе илемлетнĕ.

Ют çĕршывсенче

Виçĕ министрăн Мускаври конференцийĕ хыççăн

Иденпа Хэлл каласа пани

ЛОНДОН, ноябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Англин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Иден тата США-н государственнăй секретарĕ Кордэлл Хэлл Мускавра Англипе Америка корреспонденчĕсене каласа панине пичетлесе кăларнă.

Иден çапла каланă: «Эпĕ çакна шанатăп: эпир виçĕ союзник валли пĕр-пĕринпе килĕшсе пĕрле ĕçлесе пымашкăн никĕс хыврăмăр, эпир малашне мир тумашкăн никĕс хыврăмăр, çавăн пекех тата пĕтĕм тĕнчери аппарат турăмăр; вăл аппарат пулмасан, эпир тăвас тенисем ырă шухăшсем кăна пулса юлнă пулĕччĕç», — тенĕ.

США-н государственнăй секретарĕ Кордэлл Хэлл çапла каланă: конференци çакна çирĕппĕнех кăтартса пачĕ: ертсе пыракан çĕршывсем «изоляционизм патне илсе пыракан çулйĕре» йышăнмарĕç. Малалла Хэлл çакна паллă туса каланă: Англия, Россия тата США, пĕр-пĕринпе тахçанхинчен те вăйлăрах пĕрлешмелли самант тухса тăни чылаях пулать ĕнтĕ. Вăрçă ĕçне пĕр-пĕринпе тата тачăрах пĕрлешсе туса пырассишĕн тата мир тăвассишĕн пыракан юхăма халĕ Китай та таса чĕререн йышăнать, çавăнпа Китай та историллĕ декларацие алă пусрĕ. Хэлл малалла çакна хушса каланă: изоляционизм вырăнне пĕр-пĕринпе килĕшсе пĕрле ĕçлес принципа йышăннă пирки, халĕ ĕнтĕ вăрçă, политика, экономика тата социальнăй ыйтусене сӳтсе явнă чухне малалла çитĕнӳллĕ утăмсем тума йывăр пулмĕ. Вăрçă тĕлĕшпе, тенĕ Хэлл, решенисем йышăннă ĕнтĕ, вĕсене вăхăтран вăхăта пăхса тухса татах та лайăхлатма пултаратпăр. Политика тĕлĕшпе те решенисем йышăннă. Вăл решенисем тылра питĕ пысăк усă пама пултараççĕ, мĕншĕн тесен халĕ тăшмантан пĕр территори хыççăн теприне ирĕке кăларса пыраççĕ, çавăн пекех вăл решенисем вăрçă хыççăнхи тапхăрта та пысăк усă парĕç. Экономика облаçĕнче пĕрлешсе ĕçлес тĕлĕшпе Совет Союзĕ Вашингтонра США-па Англия официальнăй мар йĕркепе калаçма пуçланă калаçусене хутшăнĕ. Çав калаçусенче, сăмахран каласан, вăрçă хыççăн валюта хакне пĕр шай тытса тăрасси çинчен сӳтсе яваççĕ.

Канада премьер-министрĕ Маккензи Кинг конференци çинчен

ЛОНДОН, ноябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Оттавăри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Канада премьер-министрĕ Маккензи Кинг виçĕ министрăн Мускаври конференцийĕ çинчен çапла каланă: тăватă государствăн декларацийĕнчи шухăшсене мĕнле çырасси çинчен Канада правительствипе канашласа илчĕç. Канада правительстви декларацин статьисемпе пуринпе те пĕтĕмĕшпех килĕшет. «Эпĕ, — тенĕ Кинг, — вăл декларацие пĕтĕм кăмăлпа ырлатăп. Вăл декларацин тĕнчери халăхсене çакăн çинчен пĕлтерет: пĕрлешнĕ чи пысăк нацисем ытти çĕршывсемпе пĕрле вăрçа пĕтерсе лартса, пĕтĕм тĕнчене хăрамасăр пурăнмалли ирĕк парас тĕлĕшпе вăйлă майсем туса хума сăмах панă».

Бенеш калани

ЛОНДОН, ноябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Чехословаки президенчĕ Бенеш ТАСС корреспондентне çапла каласа панă:

«Конференци протоколĕсен авторĕсене вĕсен ĕçĕсем çав тери пысăк результатсем панине палăртса саламлатăп. Эпĕ хам, Пĕрлешӳллĕ Штатсен, Англин тата Совет Союзĕн ырă кăмăллă шухăшĕсене пĕлсе тăнă пирки, конференци лайăх ĕçсем туса хăварас тĕлĕшпе нимĕн чухлĕ те иккĕленмен. Анчах та конференци ĕçĕсем çав тери йышлă пулни вĕсем малалла мĕн пулассине питĕ тĕплĕн асăрхаттарни, вăл ĕçсен паттăрла хăюлăхĕ — эпир кĕтнинчен тата темиçе хут вăйлăрах. Эпĕ çирĕп шанса тăратăп: çавсем пурте пĕрле вăрçа пĕтерсе лартас вăхăта кĕскетсе пыраççĕ, конференцие чăннипех çĕнтерӳ конференцийĕ тесе шутлама тивĕç».

Америкăри политика деятелĕсем виçĕ министрăн Мускаври конференцийĕн итогĕсем синчен

ЛОНДОН, ноябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, пĕр аслă вырăнта ĕçлекен çын ют çĕршыв ĕçĕсен виçĕ министрĕн Мускаври конференцийĕ йышăннă декларации çинчен çапла каланă: «Конференцире пĕр-пĕрне питĕ лайăх ăнланнă; конференци декларацийĕсем пирĕн ĕмĕрхи ирĕклĕхсен аслă хартийĕ пулса тăраççĕ. Тăватă аслă çĕршывăн çав килĕшӳвĕсем çине таянса, вăрçă хыççăнхи мир çын ĕмĕтленнинчен çирĕпрех япала пултăр тесе пĕрле ĕçлеме пулать».

Представительсен палатин ют çĕршыв ĕçĕсене пăхакан комиссийĕн председателĕ Блум çапла каланă: «Конференци ĕçĕсем питĕ кăмăла каяççĕ. Малашнехи пурнăç лайăх пулассине халь шанма май пур ĕнтĕ», тенĕ.

Сенатăн ют çĕршыв ĕçĕсене пăхакан комиссийĕн председателĕ Коннэли çапла каланă: «Çав килĕшӳсем вĕсем калама çук паха. Вĕсене Америка халăхĕ кăмăлласа йышăнĕ. Çав килĕшӳсем вăрçăри юлташсемшĕн тата мирлĕ тапхăрти юлташсемшĕн чаплă маяксем пулса тăраççĕ. Çав килĕшӳсем вĕсем Россия Германипе хăй пĕччен мир тума пултарĕ, тесе калакансене çавăн пек калаçма пăрахтарĕç. Союзниксене пĕрлештерсе тăракан пĕрлĕх, çав килĕшӳсенче питĕ уççăн палăрса тăраканскер, вăрçă ĕçĕсене тата вăйлăрах туса пыма пулăшма тивĕçлĕ. Вăл çĕнтерӳ сехетне çывхартĕ».

Корреспондент каланă тăрăх, Вашингтонра çакна пысăк вырăна хураççĕ: Россия Японипе вăрçманнине питĕ асăрханса палăртса хунă пулин те, Китай представителĕ вăрçăри тата мирлĕ тапхăрти пĕтĕмĕшле тĕллевсем пирки йышăннă деклараци çине алă пуснă.

Германия Швеци суднисене океансем тăрăх çӳреме чăрмантарать

СТОКГОЛЬМ, ноябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Стокгольмри хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Германи правительстви Швеци правительствине Скагеррак проливĕнче вăрçă ĕçĕсем пынă пирки океансем тăрăх çӳрекен Швеци суднисем валли хăрушсăрлăх тума май çукки çинчен пĕлтернĕ.

«Дагенс нюхетер» ятлă хаçат çак ĕç çинчен хăйĕн умстатьинче çапла калать: «Океан леш енче пирĕн суднăсене çӳреме чарни нумай вăхăта пырас пулсан, пирĕн апат-çимĕç турттарасси чарăнма пултарать. Вăрçа хутшăнман çĕршыва хупăрласа илсе мăшкăллани вăрăм вăхăта пыма пултараймасть. Халь нимĕçсем пирĕн суднăсене иртсе çӳреме ирĕк парасшăн мар пулсан, çак ирĕке малашнехи вăрçă ĕçĕсем пама пултарĕç».

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, ноябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен çарĕсен пехотнăй чаçĕсем нимĕçсен оборона тĕввисем пулса тăракан Изерния тата Венафро хулисем патнелле икĕ çĕртен куçса пыраççĕ. Вĕсем çав хуласене çитесси 15 километр кăна юлнă. Американецсен 5-мĕш армин кăнтăрти сылтăм флангĕ тата акăлчансен 8-мĕш армин çурçĕрти сулахай флангĕ Дель Матезе тăвĕ районĕнче наступлени туса пыраççĕ. Вĕсем çапăçса ял хыççăн ял йышăнса пыраççĕ.

Тăшман оборонин Теано ятлă паха пунктне йышăнса илнĕ акăлчансен çарĕсем, çитĕнĕве вăйлатса пырса, çав хуларан çурçĕртерехри тата хĕвелтухăçнерехри çӳллĕ вырăнсене тыта-тыта илеççĕ. 1.500 гитлеровеца яхăн тыткăна илнĕ.

ИТАЛИРЕ ГИТЛЕРОВЕЦСЕМПЕ КĔРЕШМЕ МОТОРИЗОВАННĂЙ ЧАСТЬ ТУНА

ЛОНДОН, ноябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви Бадольо заявленине пĕлтернĕ. Заявленире итальянецсен моторизованнăй чаçне туни çинчен каланă. Ку чаçе союзниксем панă тата итальянецсен хăйсен материалĕсемпе хĕçпăшаллантарнă. Часть тăшманпа çапăсма пĕтĕмĕшпех хатĕрленсе çитнĕ.

ФРАНЦИРЕ 40.000 ГОРНЯК ЗАБАСТОВКА ТĂВАТЬ

БРАЗЗАВИЛЬ, ноябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Браззавильтен радио çапла пĕлтерет: Па-де-Кале районĕнче 40.000 француз-горняк забастовка тăвать. Гитлеровецсем забастовка тăвакан 130 рабочие тытса хупнă. Анчах та кун хыççăн забастовка пушшех вăйланса кайнă.

ТУРЦИ РЕСПУБЛИКИ 20 ÇУЛ ТУЛТАРНИНЕ ТУРЦИРЕ УЯВЛАНИ

АНКАРА, октябрĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 28-мĕшĕнче Сараджоглу премьер-министр Турци республики 20 çул тултарнă ятпа радио тăрăх кĕске сăмах тухса каланă.

Октябрĕн 29-мĕшĕнче Анкара хулинче çар парачĕ пулса иртнĕ. Республика президенчĕ Исмет Иненю пысăк мар сăмах тухса каласа, çĕршыв халăха уяв ячĕпе саламланă.

ХРОНИКА

СССР Верховный Совет Президиумĕ Сергей Алексеевич Орлов юлташа Совет Союзĕн Уругвайри чрезвычайнăй тата полномочнăй посланникĕ пулма уйăрса лартнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

ноябрĕн 4-мĕшĕнчен пуçласа кашни кун саслă илемлĕ

НАРОДНЫЕ МСТИТЕЛИ

ятлă çĕнĕ фильм кăтартать. Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 18, 20 тата 22 сехетре.

Часах

ПОДВОДНАЯ ЛОДКА Т—9

ятлă фильм кăтартма пуçлаççĕ.

Ĕç резервĕсен управленине çак специальноçсене пĕлекенсем васкавлăн кирлĕ: снабжени отделĕн начальникĕ, экономист, производствăллă вĕрентĕвĕн старши инспекторĕ, çуртйĕрпе йăла тĕлĕшĕнчен пулăшса тăрас ĕçĕн инспекторĕ.

3—1.

Шупашкарти макарон фабрикине çакăн пек работниксем кирлĕ: экономист-плановик, снабжени отделĕн начальникĕ, технически контроль отделĕн начальникĕ, грузчиксем.

Грузчиксем валли общежити пур.

Фабрикăн хăйĕн столовăйĕ тата çăкăр ларекĕ пур.

2—1.

ЧĂВАШ АССР СТАТИСТИКА УПРАВЛЕНИНЕ яланхи ĕçе служащисем кирлĕ: главнăй бухгалтер, экономистсем, статистиксем, машинистка.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Канашская, 18 (верхний этаж), отдел кадров. Телефон 2—15.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23

НТ 1146 Типография №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. 6. 53 84 п. л.